

# 2019 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институтчĕн чăваш чĕлхипе литературин кафедрин доцентчĕ*

# Экзамен ĕçĕн тытăмĕ

2-мĕш пайра – панă текста тимлĕ вуламалла та ыйтусене хуравламалла.

2-мĕш пайăн 1-13 ĕçĕсене **тĕрĕс** тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет.

Хурав **тĕрĕс пулмасан** е **вăл пачах пулмасан** – 0 балл лартаççĕ.

**2-мĕш пайăн 1-13 ĕçĕсене тĕрĕс**

**тусан пĕтĕмпе 13 балл пухма май пур.**



# Изложени тексчĕ

*Кашни этемĕн телей виçи хăйне майлă. Пĕриншĕн лайăх мăшăр тупни – чи пысăк телей. Иккĕмĕшĕ сăра курки аллине лексенех хăйне телейлĕ тесе шутлать. Виççĕмĕшĕн телейĕ тыр-пул хăçан тата мĕнле акса хăварнипе çыхăннă. Иван Яковлевич вара хăй телейне халăх телейĕнчен уйрăм курма пултараймасть. Тăван халăх хăйне паян телейлĕ тесе каласан вăл та хăйне паян эпĕ телейлĕ тесе калĕ. Шел те, паянлăха халăх апла калаймасть-ха. Эппин, Иван Яковлевич та хăйне телейлĕ тесе шутлаймасть.Унăн халăха телейлĕ тăвассишĕн ытларах та ытларах ĕçлес пулать…*

*Арçын ачасен класĕнче вĕренекенсем питĕ килĕшеççĕ Иван Яковлевича. Чăнах та, маттур ачасем унта. Вĕсемшĕн савăнмалăх пур. Çакă – унăн телейĕн пĕр пайĕ. Вĕренекенсем – тĕрлĕ çĕртен. Акă Константин Иванов… Пушкăрт чăвашĕ, маларах икĕ çул арçын ачасен шкул çумĕнчи пуçламăш училищинче вĕренчĕ. Питĕ маттурскер: сăрлама та, çырма та пултарать, юрлама та ăста. Тăрăшсан чăн- чăн художника та тухĕ…*

*Николай Васильев – Шупашкар енчисем, Иккасси ялĕнчен. Тĕлĕнмелле çивĕч чĕлхеллĕ.*

*Тепĕр ача килĕшрĕ Яковлева. Ку вăл – Етĕрне енчен Исментер ялĕнчен килнĕ Даниил Семенов.*

*Сĕве тăрăхĕнчен килнĕ Тăхăрьял ачи Тимкка Семенов (ăна ялта Тайăр Тимкки теççĕ иккен) питĕ маттур пулас, теме те пĕлесшĕн çунать…*

*«Кусем халăхшăн тăрăшакансем пулĕç», – шухăшларĕ Яковлев ачасем патĕнчен черетлĕ урокран тухнă май.* (Юхма Мишши çырни тăрăх.)

# Тишкермелли текст

*(1)Тăван чĕлхемĕрçĕм…(2) Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать. (3)Шухăшлатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле тарăн пĕлтерĕшлĕ çак икĕ сăмах!*

*(4)Тăван чĕлхе – чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăх. (5)Унта – Тăван çĕр-шывăн сенкер пĕлĕчĕ, уçă сывлăшĕ, аслати-çиçĕмĕ, хирĕ-уйĕ, улăхĕ-çаранĕ, тăвĕ-сăрчĕ, Атăлĕ-Пăли, унăн ытарайми юманлăхĕпе шĕшкĕлĕхĕ…(6)Пурнăçра ăру хыççăн ăру иртет: пĕр ăру вилет, тепри çуралать, вĕсен пурин те ăс-пуç пуянлăхĕ чĕлхере упранса юлать.(7) Халăх сăвви-юрринче, юмах-халапĕнче, халăх сăмахлăхĕнче этемшĕн Тăван çĕр-шыв чи хакли пулни уйрăммăнах уççăн палăрса тăрать.*

*(8)Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме вĕрентнĕ.(9) Çавăнпа та-и, тен, пирĕн халăхăн пултарулăхĕнче тăван ашшĕ-амăш чĕлхине манакансенчен тăрăхласа кулаççĕ, ун пек çынсем çине халăх ашшĕ-амăшне маннă çынсем çине пăхнă пекех йĕрĕнсе пăхать.*

*(10)Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмен чăваш мĕскĕне тухнă, маннине – шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă, пĕлес темене – айван тенĕ, юратманнине – ылханса ятланă.*

*(11)Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ.* (Г.Н. Волков çырни тăрăх.)

**2.1.** *Итленӗ тата вуланӑ текстсене мӗнле шухӑш пӗрлештерет?*

Ку ыйтӑва итленӗ тата вуланӑ текстсене танлаштарса тишкернӗ хыҫҫӑн хуравлама пулать. Вӗренекенӗн авторсем пӗтӗмлетӳ тунӑ пӗрлехи пая тупмалла, вӗсем мӗнле проблема хускатни ҫинчен шухӑшламалла. ***Тема*** – сӑнлавра, калавра тата ӑславра ярлана, пулӑма, пулса иртнӗ ӗҫе сӑнласа пани: Текстра мӗн ҫинчен каланӑ? ***Идея*** – текстӑн тӗп шухӑшӗ; автор мӗн каласшӑн пулни, ун шухӑшӗ. Текст ячӗ темӑпа идейӑна палӑртма пулӑшать.

2.1. Итленӗ текстпа вуланӑ текста мӗнле шухӑш пӗрлештерет?

1) Атте-анне ӑшши ҫеҫ ачана телей кӳрет.

2) Чыса ҫамрӑкран упра.

3) Тӑван халӑх, тӑван чӗлхе малашлӑхӗ пирӗнтен килет.

4) Ӗҫ – пурнӑҫ илемӗ.



2.2. ***Ача*** хӑй вуланӑ текст шухӑшне мӗнле ӑнланнине ӳҫса парать.

**2.2.** Хӑвӑр вуланӑ текстра автор шухӑшне хӑш предложени ӳҫса парать?

1) 1 2) 6 3) 8 4) 11

**2.3.** Текст стильне палăртасси. ***Стиль*** тесе чĕлхе мелĕпе усă курнин уйрăмлăхне, пуплев тĕсĕсен хăйне евĕрлĕхне калаççĕ. Калавпа очерка пăтраштараççĕ: иккĕшĕнче те çыннăн пурнăçне общество аталанăвĕн мĕнле те пулин тапхăрĕпе, мĕнле те пулин вырăнпа çыхăнтарса уçса параççĕ.

Очеркра, калавпа танлаштарсан, историре чăннипе пулнă çынпа, истори документчĕсенче асăннă ку е вăл вăхăтпа тата вырăнпа çыхăнтарса паллаштараççĕ. Очеркра паян кун, çак самантра пĕтĕм халăха пырса тивекен калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва тапратаççĕ.

Калав вăл хронологие, вырăна шăп та лăп архив документĕнчи пек çырса пани мар. Калав авторĕ вулакана тавра курăм енчен аталантарас, ăс парас, эстетика енчен витĕм кӳрес тĕллев лартать. Очеркăн пĕлтерĕшлĕхĕ кĕске вăхăтрах сӳнет, калавăн – нихçан та çухалмасть.

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?

1) калаçу стилĕпе
2) наука стилĕпе
3) публицистика стилĕпе
4) илемлĕ литература стилĕпе

2. 4. Лексикăпа (антоним, синоним е омоним тупассипе) çыхăннă.

**2.4. Хăш предложенире антоним пулакан глаголсем пур?**

**1) 1 2) 4 3) 6 4) 11**

2. 5. *А*часен фонетика пĕлĕвĕ епле йĕркеленсе çитнине тĕрĕслеме май парать: *[Й] сасă хăш сăмахра пур? Сасăсем сас паллисенчен нумайрах (сахалрах) сăмах хăшĕ?*

**2.5. 2-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?**

**1) сăмахсене 2) пĕтĕм 3) юратăвне 4) калать**

2. 6. Илемлĕх мелĕсене тупассипе çыхăннă.

**2.6. 4-мĕш предложенире мĕнле троп палăрать?**

**1) танлаштару 2) перифраз 3) сăпатлантару 4) гипербола**

2.7. Сăмах тытăмĕпе тата пулăвĕпе çыхăннă.

**2.7. 5-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*юманлăхĕпе)* мĕнле пулнă?**

**1) *ю* евĕрлев сăмахĕ çумне -*ман* тата -*лăхĕпе* аффикссем хушăннипе**

**2) *юм* япала ячĕ çумне -*ан* тата -*лăх* аффикссем хушăннипе**

**3) *юман* япала ячĕ çумне -*лăх* аффикс хушăннипе**

**4) *юманлăх* япала ячĕ çумне -*пе* аффикс хушăннипе**

2.8. Сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырассипе çыхăннă.

**2.8. 5-мĕш предложенире *улăхĕ-çаранĕ* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?**

**1) мăшăр сăмах пулнă пирки**

**2) хутлă сăмах пулнă пирки**

**3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки**

**4) *çаран* татăка яланах дефиспа çырнă пирки**

**2.9.** Морфологипе (пуплев пайёсене уйăрассипе) çыхăннă. *Тĕл* тата *çĕр* сăмахсем вырăн пĕлтерĕшлĕ чухне япала ячĕ пулаççĕ, ытти чухне – хыç сăмах: *Метеорит ӳкнĕ* ***тĕлте*** *çĕр пичĕ паллама çук улшăннă. Хĕвел аннă* ***тĕле*** *кăшман лаптăкне çумласа та пĕтертĕмĕр.*

**2.9. 11-мĕш предложенири *та* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?**

**1) паллă ячĕ 2) местоимени 3) союз 4) глагол**

2. 10. Предложенин шухăш тĕшшине тĕрĕс палăртассипе çыхăннă.

**2.10. *Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать* предложенире (2 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?**

**1) ку сăмахсене**

**2) çын**

**3) хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса**

**4) калать**

2.11. Предложени членĕсене тупассипе çыхăннă.

**2.11. *Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме верентнĕ* предложенире (8 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?**

**1) халăх 2) çамрăксене 3) хисеплеме 4) вĕрентнĕ**

2.12. Хутлă предложенисемпе çыхăннă.

**2.12. 9-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?**

**1) сыпăнуллă хутлă**

**2) союзсăр хутлă**

**3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă**

**4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă**

2.13. Пунктуаципе çыхăннă.

**2.13. 6-мĕш предложенире запятой лартнин сăлтавне ăнлантарăр.**

**1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннăран**

**2) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнăран**

**3) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартнăран**

**4) союзсăр хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнăран**

# Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Ĕçĕн иккĕмĕш пайне тума **40** минут уйăраççĕ. Çак вăхăтра иккĕмĕш (вуланă) текста тимлĕ вуласа тухмалла, пĕрремĕш (итленĕ) текстпа танлаштармалла тата тест ыйтăвĕсене хуравламалла.



# Экзаменра ăнăçу сунатпăр!